2019-мӗш çулхи кӑрлач уйӑхӗн 09-мӗшӗнчи
04№лӗ приказ çумне
1-мӗш хушса пани

**Республика шайӗнче ирттерекен**
**«Чӑвашла уяв янратӑр!» сценарисен конкурсӗн**
**положенийӗ**

**Пӗтӗмӗшле калани**

Республика шайӗнче ирттерекен «Чӑвашла уяв янратӑр!» сценарисен конкурсне (малалла – конкурс) Чӑваш Республикин вӗренӳ тата çамрӑксен политики министерствин хушма професси вӗренӗвӗн «Чӑваш Республикин вӗренӳ институчӗ» Чӑваш Республикин бюджет учрежденийӗ йӗркелесе пырать.

Конкурса ирттерме Конкурсӑн йӗркелӳ комитетне тӑваççӗ. Комитетра кам тата миçен ӗçлессине конкурса йӗркелекенсем палӑртаççӗ.

**Конкурс тӗллевӗсемпе задачисем:**

– чӑваш чӗлхипе литературине, тӑван ен культурине вӗрентекенсен кулленхи ӗçне çӑмӑллатма интернетра çителӗклӗ чухлӗ уяв сценарийӗ пуçтарасси;

– тӑван чӗлхене, литературине тата культурине аталантарас енӗпе творчествӑллӑ ӗçлекен педагогсене тупса палӑртасси, вӗсен паха опытне сарасси;

– ачасен тавра курӑмне, пуплев культурине аталантарас ӗçре педагогсем усӑ куракан çӗнӗ мелсемпе меслетсене тупса палӑртасси.

**Конкурса ирттерме палӑртнӑ вӑхӑт**

Конкурс 2019-мӗш çулхи кӑрлач уйӑхӗн 10-мӗшӗнчен пуçласа 2019-мӗш çулхи нарӑс уйӑхӗн 28-мӗшӗччен пырать.

**Конкурса хутшӑнакансем:**

шкулчченхи вӗренӳ организацийӗсенче, пӗтӗмӗшле пӗлӳ паракан вӗренӳ организацийӗсенче, хушма пӗлӳ паракан вӗренӳ организацийӗсенче, професси пӗлӗвӗ паракан вӗренӳ организацийӗсенче ӗçлекен педагогсем.

**Конкурс номинацийӗсем:**

- шкулчченхи вӗренӳ организацийӗсенче ирттерекен уявсен сценарийӗсем,
- пӗтӗмӗшле пӗлу паракан вӗренӳ организацийӗсенче ирттерекен уявсен сценарийӗсем,
- хушма пӗлӳ паракан вӗренӳ организацийӗсенче ирттерекен уявсен сценарийӗсем,
- професси пӗлӗвӗ паракан вӗренӳ организацийӗсенче ирттерекен уявсен сценарийӗсем.

**Конкурса ирттермелли йӗрке**

Конкурс кӗретсӗр (заочно) формӑпа иртет. Конкурс тӳлевлӗ, хакӗ – 300 тенкӗ (квитанци). Педагог конкурса темиçе ӗç те тӑратма пултарать. Кашни ӗçшӗн уйрӑмшарӑн тӳлемелле пулать.

Сценарисене чӑвашла çырмалла, чӑваш клавиатурин ятарлӑ сарӑмӗпе (шрифчӗпе) усӑ курса пичетлемелле. Сарӑм лартмалли программӑна http://www.chrio.cap.ru/ сайтран «Наци вӗренӗвӗ» баннертан уçласа илме пулать.

Сценарисене Times New Roman шрифтпа, 12-мӗш размерпа наборламалла. Сӑн тата ытти йышши ӳкерчӗксем **jpg** форматпа, презентацисем **.ppt** форматра пулмалла. Видео формачӗсем анлӑ сарӑлнисем пулсан лайӑх. Вӑрӑмӑшӗ 10 минутран ытла пулмалла мар.

Конкурс материалӗсем унччен интернетра е урӑх çӗрте пичетленменнисем пулмалла. Унччехни конкурссенче малти вырӑнсене йышанман ӗçсене лайӑхлатса тепре конкурса тӑратма юрать.

Авторлӑхӗ пирки шанчӑксӑрлӑх çуратакан ӗçсене конкурса илмеççӗ; мӗнле те пулин вариантра плагиат пулсан – ӗçе конкурсӑн кирек хӑш тапхӑрӗнче пӑхса тухма чарӑнаççӗ.

Конкурса тӑратнӑ ӗçсене чи лайӑх педагогсен опытне сарас тӗллевпе пичетлеме е сайта тӑратма йӗркелӳ комиссийӗн ирӗк пур.

Конкурса хутшăнакан педагогăн chrio6-2019@mail.ru адреспа 2019-мĕш çулхи нарăс (февраль) уйăхĕн 21-мĕшĕччен çак материалсене ярса памалла:

1) заявка (1-мĕш хушăм);

2) хăй хатĕрленĕ чăваш чĕлхипе, литературипе тата культурипе урок тулашĕнче ирттермелли мероприяти сценарийĕ (е мероприятисен сценарийĕсем) (титул лисчĕ – 2-мĕш хушăм). Файла конкурсантăн хушамачĕпе ятне тата шкул ятне памалла. Тĕслĕхрен: *Алексеева АЕ Кшаушская;*

3) квитанци (3-мĕш хушăм)*;*

4) хăй çинчен пĕлтерме ирĕк паракан документ (согласие на обработку персональных данных) (4-мĕш хушăм).

**Хаклав критерийĕсем:**

– вĕренӳ ĕçĕн хальхи тĕллевĕсемпе задачисене тивĕçтерни;
– вĕренекенсен ӳсĕм тата пĕлӳ шайне тивĕçтерни, ачасен харпăр хăй аталанăвĕн уйрăмлăхĕсене шута илни;
– чĕлхе (орфографи, пунктуаци, грамматика, пуплев) нормисене çирĕп пăхăнни;
– мероприятин хăйне евĕрлĕхĕ (ытти ĕçсенчен уйрăлса тăни, темăпа творчествăллă ĕçлени, професси ăсталăхĕ);
– çĕнĕ, тухăçлă технологисемпе усă курни.

**Конкурса пĕтĕмлетни**

Конкурс пĕтĕмлетĕвне жюри положенире палăртнă хаклав критерийĕсене шута илсе тăвать. Пĕтĕмлетĕве протокола çыраççĕ. Ăна жюри председателĕ е ун çумĕ çирĕплетет.
Чи нумай балл пухнă педагог конкурс çĕнтерӳçи пулса тăрать.
Жюрин номинацисен ятне, йышне улăштарма ирĕк пур. Ку ирĕкпе усă курса йĕркелӳ комитечĕ тивĕçлĕ йышăну тăвать.
Çĕнтерӳçĕсене тата призерсене дипломсем парса чыслаççĕ. Конкурса ирттерекенсем конкурсантсем валли ятарлă парнесем палăртма пултараççĕ. Конкурса хутшăнакан кашни вĕрентекене сертификат параççĕ.
Конкурс çинчен информацие Чăваш Республикин вĕренӳ институчĕн сайтне (chrio.cap.ru) вырнаçтарма палăртнă.

**Çыхăну адресĕ**

Конкурса йĕркелекенсен адресĕ:
428001 Шупашкар хули, М. Горький проспекчĕ, 5-мĕш çурт, Чăваш Республикин вĕренӳ институчĕ, 216-мĕш пӳлĕм (наци вĕренĕвĕн центрĕ).

Телефон 8-8352-58-46-44.

E-mail: chrio6@cap.ru .